Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерÿ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

27 (7771) № * Юн кун, 2010 çулхи апрелĕн (ака) 14-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Уйăхлăх пырать

## Тасалăхпа тирпейлĕх – хамăр алăра



*Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче уй-хир бригадине ĕçе тухакансен вăйĕпе тăван тавралăха илемпе хăт кĕртессине мала кăларчĕç.*

*Çапла вара Геннадий Иванович Васильев ертсе пыракан бригада ĕçченĕсем шутлă кунсенче сĕт фермине, автотараса таврашĕнче, машинăпа трактор паркĕнче тирпей-илем кĕртрĕç.*

*– Уй-хир бригадине кунсерен вăтамран 12 çын тухать пулсан та, ума лартнă тĕллевсене вăхăтра пурнăçласа пыратпăр. Пирĕн вăйхал та çывхаракан çур акипе çыхăннине курса-пĕлсе тăратпăр. Çавăнпа та кашни ĕçрех ответлăха туйса ĕçлетпĕр, – терĕ мехпарка тирпей-илем кĕртессипе ĕçлекен хĕрарăмсенчен самантлăха уйрăлса Г. Васильев бригадир.*

*– Тавралăхпа тирпейлĕх – хамăр алăра. Хамăр вăйпа тирпейленĕ территорисене кайран варалас та килмест. Тирпейлĕхе пăхса тăрассине те хамăр тивĕç вырăнне хуратпăр, – терĕç типĕ çулçăпа ытти ăпăр-тапăра карçинккана тултарса пĕр çĕре пухнă вырăна çĕклесе кайма хатĕрленсе эсир сăн ÿкерчĕкре куракан Наталья Яковлевапа Анна Яковлева ĕçченсем.*

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ÿкерчĕкĕ.**

Сывлăх

## Эмел хакĕсене патшалăх палăртать

**Апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çыннăн пурнăçĕнчи чи кирлĕ эмел препарачĕсен хакне патшалăх асăрхаса, йĕркелесе пыма пуçларĕ. Çак кунран тытăнса аптекăсенче те ятарлă перечене кĕртнĕ эмелсене çирĕплетнĕ хакпа çеç сутма пултараççĕ. Регионти суту-илÿ хакне хушассине çак шайрах татса параççĕ. Çапла майпа пурнăçри чи кирлĕ эмел препарачĕсен списокне кĕртнĕ эмелсен хакне пĕр çулталăклăх çирĕплетеççĕ. Республикăри пур аптека учрежденийĕнче те эмелсен чи пысăк хакĕ мĕнле пулнипе паллашма пулать. Ятарлă списокра – тĕнчери патентламан 500 эмел ячĕ. Ку вара 5 пин çурăна яхăн эмел форми. Списока çĕнĕ эмел ячĕсем хушăннине Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви малашне те йĕркелесе пырса ăна аптека учрежденийĕсене пĕлтерсех тăрĕ.**

**Çак ыйтупа Муркашри тĕп больницăн тĕп врачĕ, Чăваш Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов акă мĕнле комментари пачĕ:**

– Ман шутпа, çыннăн пурнăçĕнчи чи кирлĕ эмел препарачĕсен хакне патшалăх енчен контрольлесе тăни питĕ кирлĕ. Ку тĕрĕс те. Мĕншĕн тесен çак ыйтăва «çÿлтен» йĕркелесе пымасан, аптекăсенчи хаксем хăйне май ниепле те пĕр шайрах пулма пултараймаççĕ. Конкуренци хаксене чакарма майсем те памĕ. Пĕр тĕслĕх астăватăр пулĕ: халăхра «свиной грипп» тени анлă сарăлнипе, тĕрĕсрех каласан, вăхăтра тĕрĕс информаци çителĕксĕр пулнипе, çак чире хирĕç кĕрешмелли эмелсен хакĕсем хăмпă пекех хăпарса кайрĕç.

Ятарлă списока вара пирĕн районти аптекăсенче те çынсем курмалла вырăна, çăмăллăн вуланма пысăкрах сас паллисемпех çырса çакса хумалла. Хаксем епле пулмаллине пурте пĕлччĕр.

Эмелсемпе çыхăннă тепĕр самант та çынсен кăмăлне кăшт хăпартĕ тесе шутлатăп. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ ыйтнине Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думинче тивĕçтерсе, халĕ ялсенчи фельдшерпа акушер пункчĕсенче тата пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕсенче те эмелсем сутма ирĕк пачĕç. Çакă ял çыннишĕн канăç паман ыйтусенчен пĕриччĕ. Халĕ депутатсем ăна татса пачĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Район администрацийĕнче

## Çивĕч ыйтусем сахал мар

**Тунти кун район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсемпе планерка ирттерчĕ. Вăл Смоленск патĕнче пулса иртнĕ авиакатастрофăра инкек тÿснисене асăнса пĕр минут шăп тăнинчен пуçланчĕ.**

Актуаллă ыйтусене сÿтсе явнă май Юрий Александрович иртнĕ эрне кун Суворов яч. хис. хуçалăхра пулса иртнĕ агроинженери конференцийĕ çур акине хатĕрленессинче пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртрĕ. Çурхи ĕçсене вăхăтра тата пахалăхлă ирттерессиипе çыхăннă умра тăракан тĕллевсене палăртнă унта.

Финанс пайĕн ертÿçи Р.И. Ананьева кăçалхи 1 кварталта бюджета мĕнле пурнăçлани çинче тĕплĕн чарăнчĕ, çакна палăртрĕ: районăн консолидациленĕ бюджечĕн тупăш пайне çулталăкра пăхса хăварнин 23,8 процент чухлĕ пурнăçланă.

Аслă Çĕнтерÿ 65 çул тултариччен те вăхăт нумаях юлмарĕ. Районта халĕ вăрçă ветеранĕсемпе вĕсен çемье членĕсене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерес ыйтупа ĕçлеççĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертÿçи В.Г. Никитин каланă тăрăх, çурт-йĕрпе е хваттерпе тивĕçтермелли пĕрремĕш черетре 30 ветеран тăрать. Çак кунсенче асăннă управлени тата районти социаллă хÿтлĕх пайĕн специалисчĕсем ветерансен килĕсенче пулса вĕсен пурнăç условийĕсемпе паллашнă. Район пуçлăхĕ ку ĕçре ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе специалисчĕсен те ветерансемпе тачă çыхăнса ĕçлемеллине палăртрĕ, вĕсене çак çăмăллăх çинчен ăнлантарса памалла, документсем пуçтарассинче те пулăшу памалла.

Владимир Германович çавăн пекех çĕнĕ урамсене электрификацилеме хатĕрленес ĕç епле пыни çинче чарăнчĕ. 17 проект Гостехнадзорта, 26 проект патшалăх экспертизинче, тепĕр проект министерствăра. Ку ĕç малалла пырать.

Ялсене тирпей-илем кĕртес ĕç те паян çивĕч ыйтусенчен пĕри. Апрелĕн 6-мĕшĕнчен пуçласа майăн 8-мĕшĕччен районта уйăхлăх пырать. Иртнĕ эрне кун район центрĕнче субботник пулчĕ. Анчах та пур урамсенче пурăнакансем те унта хутшăнчĕç теме çук-ха. Малалла ку ĕçре пурин те хастар хутшăнмаллине палăртрĕç.

Планеркăра çавăн пекех энергипе укçа-тенке перекетлес, пушар хăрушсăрлăхĕпе, 1 квартала пĕтĕмлетессипе, районти демографи тĕлĕшĕнчи лару-тăрупа çыхăннă ыйтусене пăхса тухрĕç.

**Л. ПАВЛОВА.**



**Аслă Çĕнтерÿччен 25 кун юлчĕ!**

Кинофестиваль

## Аслă Çĕнтерĕве халалланă

**Шупашкарта иртекен Пĕтĕм тĕнчери III кинофестиваль уçăличчен шутлă кунсем юлчĕç.**

Кинофестиваль, малтан палăртнă пекех, çу уйăхĕн 8-12-мĕшĕсенче иртĕ. Ăна Раççей Культура министерстви пулăшнипе йĕркелеççĕ тата Аслă Çĕнтерĕве халалласçĕ. Президенчĕ – Раççей Федерацийĕн халăх артисчĕ, «Мосфильм» киноконцерн генеральнăй директорĕ, РФ Общество палатин членĕ Карен Шахназаров кинорежиссер.

Фестиваль программи пĕлтĕрхи пекех пуян. «Çеçпĕл» кинотеатрта конкурса тăратнă тулли метражлă илемлĕ фильмсене кăтартĕç. Кунтах çу уйăхĕн 8-9-мĕшĕсенче «Çар кино каçĕ» тата «Карен Шахназаровăн фильмĕсен каçĕ» иртĕç. Вера Токареван «Незабываемое» тата «Однофамильцы Федоровы» ĕçсемпе паллашни – кинофестивалĕн хăйне евĕрлĕхĕ.

Вăрçăпа çыхăннă фильмсене, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 65 çул çитнине халалланисене тĕп хулари Хĕрлĕ тÿремре уçă тÿпе айĕнче пăхма май килĕ.

Электрификаци

## 52 урама çутă çитмелле

*Юлашки çулсенче никĕсленнĕ çĕнĕ урамсем сахал мар. Унта пурăнма тухакан çамрăк çемьесене хумхантаракан тĕп ыйту вăл – çав урамсенче электричество çути çукки. Çак ыйтупа район хаçачĕн сотрудникĕ А. БЕЛОВ райадминистрацин пуçлăхĕн çумĕпе, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕпе В. Г. НИКИТИНПА тĕл пулса калаçнă.*

**– Владимир Германович, миçе çĕнĕ урам паян «çутăсăр» ларать?**

– Паянхи куна çамрăксем уйрăлса тухнипе йĕркеленнĕ урамсем районта 81. Вĕсенчен 52-шĕнче паян электричество линийĕсем çук. Вĕсене электричество çути кĕртме кая юлмасăр проектсем хатĕрлесси кун йĕркинче тăрать. Хальхи вăхăтра 52 проект та хатĕр темелле. Вĕсенчен 2-шĕ экспертиза витĕр тухса (вĕсене тăвас тĕлĕшпе ЧР Энергетика министерствинче конкурс пуласса кĕтетпĕр), 32 проект ЧР Строительство министерствинче экспертизăра, пĕри проект институтĕнче, 2 проект «Чăвашэнергора», 15-шĕ – «Ростехнадзорта».

**– Çĕнĕ урамсене çутă çитерессипе ĕçсем ăçта епле пыраççĕ-ха?**

– Кунта ыра енчен Оринин, Москакасси, Йÿçкасси, Хорнуй, Чуманкасси ял тăрăхĕсене палăртмалла. Çав вăхăтрах Катькас ял тăрăхĕнче пĕр проект çеç хатĕрлемелле пулсан та, вăл хатĕр мар. Юлашки вăхăтра Ярапайкасси, Шетмĕпуç, Уйкас Янасал ял тăрăхĕсем палăрмаллах туртăнни сисĕнет. Сăмахран, Ярапайкасси тăрăхĕнче 9 урам валли (районта чи нумайăи) проект кирлĕ. Ку енĕпе ĕçсем пыраççĕ.

Саламлатпăр



Юратнă аннене, мамака, кукамая, хунямана, тăхлача, хисеплĕ тăвана – Çурлатри ялĕнче пурăнакан **Зоя Викторовна НИКИТИНАНА** çуралнă кунĕ ячĕпе чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Анне, сана çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр. Пурнăçу ăнса пытăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăçлантăр. Килте яланах килĕшÿ пултăр.

**Сана хисеплесе ывăлупа кинÿ, хĕрĕпе кĕрÿшĕ тата мăнукĕсем Димăпа Алина, Надьăпа Вова.**



Юратнă аннене, асаннене, ырă кăмăллă аппана, ытарайми тăванăмăра – Хорнуй ялĕнче çуралса ÿснĕ, халĕ Муркашра пурăнакан **Луиза Ивановна КОНДРАТЬЕВАНА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Эсĕ 40 çул ытла Тăвайри вăтам шкулта çĕршер ачана вырăс чĕлхипе литературине, илемлĕх тĕнчине туйма-курма вĕрентнĕ. Тĕрлĕрен пысăк наградăсене тивĕçнĕ. Коллективра, вĕренекенсен тата ял-йыш умĕнче ырă ятлă. Эпир санпа мухтанатпăр, эсĕ пурри пире вăй-хал парса тăрать. Сана пурнăçра çирĕп сывлăх, телей, ачусемпе, мăнуксемпе савăнса пурăнма ырлăх-сывлăх сунатпăр.

**Саламласа ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрÿшĕ, мăнукĕсем, Филипповсен, Ефановсен, Проворовсен çемйисем тата пĕтĕм тăванĕсемпе юлташĕсем.**

**Приглашает общественная приемная**

**С апреля 2010 года начинает свою работу общественная приемная представителя уполномоченного по правам ребенка в Чувашской Республике по Моргаушскому району Ванеркина Николая Григорьевича.**

**Прием граждан будет проходить каждый первый и третий четверг месяца с 13-00 до 15-00 часов по адресу: с. Моргауши, ул. Мира 9А, общественная приемная Всероссийской политической партии «Единая Россия». 4-14.**